25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ИЮЛЬ
29
ЮНКУН
175 (6110) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Тырпулсене пухса кĕртме организованно тытăнар!

Республикăри уйăхсенче кĕрхи вырăсем пиçсе çитессĕ. Калинински, Елчĕк тата ытти районсенче хăшпĕр колхозсем [illegible] суйласа илсе вырма тытăнчĕç. Июлĕн 27-мĕшĕнче Калинински районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан, «Знамя труда», «Искра», Ленин ячĕпе тăракан, Елчĕк районĕнчи «Трактор», Сталин ячĕпе тăракан, Дзержинский ячĕпе тăракан колхозсем хăйсен ытти участокĕсене суйласа илсе вырма тытăнчĕç.

Çапла ĕнтĕ тырпулсене пухса кĕмелли хĕрÿллĕ кунсем килсе çитрĕç. [illegible] республикăн ытти районĕсенчи колхозсем те суйласа вырма тытăнаççĕ, [illegible] республикăри тырпулсене массăллăн пухса кĕрес ĕç пуçланать.

«Тырпула пухса кĕртесси вăл — сезонсем тумалли ĕç мар, [illegible] Вăхăтра пухса илтĕн — туянтăн, кая юлтăн — çухатрăн», тесе вĕрентет пире хамăрăн çулпуç Сталин юлташ. Нумайрах тырпул туянас тесен, сахалрах çухатас тесен, тырпулсене пухма пирĕн вăхăтра тытăнас пулать, вăл ĕçе организованно тухас пулать. Ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксем, ялти кашни коммунистпа комсомолец, кашни колхозникпе колхозница, МТС-ри тата совхозри кашни работник хăйĕн пĕтĕм вăйне хурса ырми-канми ĕçлесен кăна эпир тырпулсене пухса кĕрес ĕçе, çуракине ирттернĕ пекех, ăнăçлăн туса ирттерме пултаратпăр.

Халĕ пирĕн умра тăракан чи çивĕч задачăсенчен пĕри вăл — **уборкăна тухма хатĕрленес ĕçсене паян-ыранах вĕçлесси** пулса тăрать. Тырпулсене пухса кĕме хатĕрленсе çитмен районсем е колхозсем халĕ пулмалла мар ĕнтĕ. Колхозсемпе МТС-сен машинисем, ĕç хатĕрĕсем, туртăм вăйĕсем ĕçе тухма хатĕр тăмалла. Юсаса çитермен комбайнсем, жнейкăсем, молотилкăсем, косилкăсем пулсан, вĕсене паянах, ырана хăвармасăр, юсаса çитерес пулать. Тăхтаса тăма текех вăхăт çук ĕнтĕ, хатĕрленмелли вăхăтсем иртсе пыраççĕ, ĕçе тытăнмалли вăхăт килсе çитрĕ.

Тепĕр пысăк задача вăл — **ĕç вăйне туртăм вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тăратасси.** Халĕ кашни колхозникпе колхозница хăйĕн ĕç вырăнне пĕлсе тăмалла, ыран вăл ăçта ĕçлесси паянах паллă пулмалла, ыран миçе лашапа тата ăçта ĕçлемеллине паянах палăртса хумалла. Уборка вăхăчĕ — хĕрÿллĕ вăхăт. Пирĕн пĕр вăхăтрах темиçе ĕç туса пымалла пулать. Тырă вырасси те, авăн çапасси те, калапсем тăвасси те, государствăна тырă парасси те вăхăтра тата ăнăçлăн пулса пытăр тесен, ĕç вăйне тата туртăм вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухас пулать. Çакна кашни колхоз председателĕ, ялта ĕçлекен кашни работник ăнланса илни кирлĕ. Тырпулсене пухса кĕнĕ вăхăтра кашни кун, кашни сехет хаклă тăрать, çапла вара кашни колхозникпе колхозница ĕçре пулни татах та хаклăрах пулмалла. Çавăнпа та уборка вăхăтĕнче ĕçе тухман, кахалланса ларакан колхозникпе колхозница пулмалла мар, ĕçрен пăрăнакан колхозник государство умĕнче, çĕршыв умĕнче, хăйĕн колхозĕ умĕнче пысăк айăпа кĕрет, преступлени тăвать. Халĕ колхозри дисциплина хурçă пек çирĕп пулмалла.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçĕн ăнăçлăхне **машинăсемпе туллин усă курни** татса парать. Кашни комбайн тата кашни жнейка талăкра 16 сехетрен кая мар ĕçлемелле, кашни молотилка кунне 20 сехетрен кая мар ĕçлемелле. Çакă вăл—закон пулса тăмалла. Çавăн пек тусан çеç эпир уборка ĕçĕсене икĕ-виçĕ хут хăвăртлатма пултаратпăр. Анчах пĕр машинăсем çине çеç шанса ларни те, машинăсене хаклаланни пекех, сиенлĕ пулнă пулĕччĕ. Тырă вырас ĕçре кăçал çавасемпе тата çурласемпе те анлăн усă курмалла.

Иртнĕ çулсенче тырпулсене пухса кĕнĕ вăхăтра çанталăк начар тăни чылай чăрмавсем кÿнĕ. Çавна май çумăрлă кунсемпе витĕнсе ĕçе вăраха ярса пыракансем те пулкаларĕç. Уйрăмăнах республикăна Первомайски районĕ каялла туртса пычĕ. Кăçал пĕлтĕрхи йăнăшсене тепĕр хут тумалла мар. «Çумăр çăвать, ĕçлеме май çук» тесе кахалланса ларакансем ĕçе дезорганизацилеççĕ, вĕсем вĕрçăн хăрушă кунĕсем çинчен манса каяççĕ.

Ку çеç те мар. Пирĕн хушăра час-часах «симĕс шухăш-кăмăллă» руководительсем тĕл пулкалаççĕ. «Пулса çитеймен-ха, симĕсрех-ха тырă, çавăнпа вырма тытăнаймарăмăр», теççĕ вĕсем. Кÿршĕри колхоз тырпула вырса пĕтерес вăхăталла тин вĕсен тырри «пулса çитет». Çавăн пек йăлана хирĕç татăклăн кĕрешсе пырас пулать. **Пĕтĕм участок пиçсе çитессе кĕтсе ларасăр, суйласа илсе вырса пымалла.** Тырă пĕрчи хытса çитессе кĕтмелле мар, вăл ăвăс пек пулса çитсенех ăна вырма тытăнмалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 27-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июлĕн 27-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа хирĕç Воронеж районĕнче, çавăн пекех тата Цымлянская районĕнче, Новочеркасск тата Ростов пунктсенче пухса çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пăлă улшăнусем пулман.

Варенц тинĕсĕнче пирĕн карапсем противникăн подводнăй лодкине тата 10.000 тонна хисепленекен транспортне путарнă.

Июлĕн 26-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 82 танкне, войскăпа грузсем турттарса пыракан 260 автомашинине, горючи тултарнă 7 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 3 складне сирпĕнтерсе янă, зенитнăй тата полевой артиллерин 7 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине икĕ батальон ытла сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронеж районĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çаплах хаяррăн çапăçнă. Пирĕн пĕр часть Воронежран хĕвеланăçнерех вырăнта Дон шывĕ урлă каçнă. Тепĕр часть противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1.200 çынна çити пĕтерсе тăкнă та, Воронежран кăштах кăнтăрарах вырăнта Дон шывĕ урлă каçнă. Халĕ çав икĕ часть противника хирĕç Дон шывĕн хĕвеланăç енче активлăн çапăçаççĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем халăх пурăнакан пиллĕк кирлĕ пункта йышăннă. Противник хăй çухатнă позицисене каялла туртса илесшĕн тунă контратакăсем ăнăçлă пулман.

* * *

Цымлянская районĕнче противник Дон шывĕн кăнтăр енне каçса каясшăн çапăçать. Çапăçусем пĕрре пирĕншĕн, тепре противникшăн ăнăçлă пулса пыраççĕ. Пĕр участокра нимĕçсем малалла куçма пултарнă. Сасартăк пырса çапса, пирĕн пехотинецсемпе тан[illegible] чарса лартнă тата каялла лĕснĕ(?). Çав çапăçура нимĕçсен 5 танкне, 8 орудине тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 350 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

Ленинград фронтĕнче вырăнти çапăçусем пулнă тата [illegible] Пĕр участокра [illegible] хăйсен [illegible] пункта каялла тытса илнĕ. [illegible] гитлеровецсен 150 вилли выртса юлнĕ. Халăх пурăнакан [illegible] пĕлтерĕвĕччĕ, çавăн чухне пирĕн боецсем противникран 9 пулемет, винтовкăсемпе автоматсем нумай, 500 граната, 100.000 çити патрон тата боеприпассен пысăк складне тытса илнĕ.

* * *

Ленинград облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен Т. юлташ ертсе пыракан отрядĕнчи пĕр группа 22 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Партизансем тепĕр группи противникăн чугунçулпа пыракан эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Çавăн чухне паровоз тата тракторсем тиенĕ темиçе платформа çĕмĕрĕлнĕ, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем 150 çынна çити вилнĕ.

* * *

Хаяр çапăçусенче Хĕрлĕ Çар нимĕç войскисен чылай чаçĕсене пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен командованийĕ Европăри оккупациленĕ çĕршывсенчен Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта васкасах çĕнĕ подкрепленисем куçарса килет. Палăртнă тăрăх, нумаях пулмасть кунти фронта Ваннран тата Гавртан 305-мĕшпе 306-мĕш дивизисем çитнĕ, вĕсем хыççăн Парижран 25-мĕш танковăй дивизи тата ытти чаçсем те килнĕ.

Нимĕçсен 305-мĕш пехотнăй дивизийĕнче пулнă чухне вĕлернĕ обер-фельдфебель Конрад Динкнер çумĕнче вăл хăйĕн юлташне патне Вена хулине яма хатĕрлесе хунă çырăва тупнă. Унта вăл çапла çырнă: «Ырă Францире эпир тата нумайччен пурăнма шутланăччĕ, анчах та ун вырăнне вутлă тамăка лекрĕмĕр. Пĕлместĕп, кунтан çăлăнса тухма пулĕ-ши, пулмĕ-ши... Вахн хулинчех, дивизие Хĕвелтухăçне ярасси паллă пулсанах, салтаксем нумайĕшĕ пуçĕсене усрĕç... Офицерсем хушшинче хĕрÿ тавлашусем пуçланса кайрĕç. Пĕрисем çапла ĕнентерсе каларĕç: кашни минутăрах çурăм хыçĕнчен пырса çапасса кĕтсе тăнă чухне çапăçма пултаракан чаçсене Францирен кăларса кайни ăссăр ĕç пулать вăл, терĕç. Теприсем çакна ĕнентерме тăрăшрĕç: кам ĕçе нимрен хăрамасăр туса хăйĕн тăшманĕсене кая хăварса пырать, çав çĕнтерет, терĕç. Вĕсенчен кам тĕрĕс калаççине малалли ĕçсем кăтартĕç. Анчах халĕ пире хура кунсем хупласа тăраççĕ. Енер вырăссем пирĕн батальона флангран пырса çапрĕç, пирĕн пысăк çухатусем тÿсмелле пулчĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Латви халăхне ирĕксĕрлесе Германие каторгăлла ĕçе хĕваласа каяççĕ. Юлашки вăхăтра гитлеровецсем Рига, Лудзенски тата Резетниковски уездсенчен арçынсене, хĕрарăмсене тата çул çитмен çамрăксене 750 çын ытла Германие янă. Кам Германие кайма килĕшмест, вĕсене фашистла ирсĕрсем пурне те тĕрмене тытса хупаççĕ е персе пăрахаççĕ. Резетниковски уездри ялсенче гестапо темиçе кун хушшинче кăна 40 хресчене ытла персе пăрахнă е çакса вĕлернĕ.

* * *

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта Францирен чугунçулпа килекен çар эшелонĕ Бохня станцийĕ патĕнче (Польшă) ÿпĕнсе кайнă. Нимĕçсен салтакĕсем çĕршер çын вилнĕ тата аманнă. Пĕлтернĕ тăрăх, поезд Польша патриочĕсем лартса тухнă минăсем çине пырса кĕнипе сирпĕнсе кайнă.

Июлĕн 28-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июлĕн 28-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Воронеж** районĕнче, çавăн пекех тата **Цымлянская** районĕнче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Воронеж районĕнче çаплах çапăçусем пынă. Пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене пыра-пыра çапса, хăйсен позицийĕсене кăштах лайăхлатнă. Дон шывĕн хĕвеланăç енне каçнă чаçсем противника хирĕç вăйлăн çапăçнă. Тепĕр участокра гитлеровецсем халăх пурăнакан пункта, пирĕн войскăсем иртнĕ кун тытса илнĕскере, атакăланă. Çав ял патне пымалли вырăнсенче темиçе çĕр салтакпа офицер тата 3 танк пĕтсен, нимĕçсен каялла чакмалла пулнă. Тăшмана совет артиллерисчĕсем ăнăçлăн пĕтерсе пыраççĕ. Пирĕн артиллерин пĕр дивизионĕ пĕр талăк хушшинче нимĕçсен 4 йывăр танкне пĕтерсе тăкнă, артиллерин 3 батарейине тата минометсен 2 батарейине пусарса лартнă, противникăн боеприпассем хунă складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Дон шывĕн кукăрĕнче пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе мотопехотин йышлă атакисене сире-сире ярaççĕ. Пирĕн пĕр часть пĕр кун хушшинче нимĕçсен 25 танкне тата 70 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Совет авиацийĕ гитлеровецсен çапăçу йĕркисем çине темиçе хутчен бомбăсем пăрахнă. 27 танк, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 78 автомашина, 100 лав ытла тата темиçе полевой орудипе зенитнăй орудисем пĕтерсе тăкнă. Противникăн пехотине икĕ ротăна çити тата кавалерине пĕр эскадронран кая мар сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн бомбардировщиксем, противникăн аэродромĕсене атакăласа, çĕр çинче нимĕçсен 22 самолетне пĕтерсе тăкнă, 15 самолетне сиенленĕ. Сывлăшри çапăçура совет истребителĕсем нимĕçсен «Мессершмитт—109» йышши 3 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Калинин фронтĕнче вырăнти çапăçусем пулса пынă. Пĕр участокра противник пирĕн оборонăн рубежне тытса илме хăтланнă, вăл атакăна 2 полк таран пехота тата 40 танк янă. Нимĕçсем малтан, пирĕн малти хуралсене хĕссе, пирĕн оборонăн малти хĕрри патне татса кĕме пултарнă. Анчах та унта гитлеровецсене артиллерирен питĕ вăйлăн персе кĕтсе илнĕ. Гитлеровецсем пысăк çухатусем тÿснĕ, вĕсен çĕр çине выртмалла пулнă. Çав вăхăтра пирĕн чаçсем контратака тунă та противника хăйĕн малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă.

* * *

Орел облаçĕнчи партизансен Е. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ виçĕ эрне хушшинче 100 оккупанта çити пĕтерсе тăкнă. Икĕ броневик, 5 грузовой тата пĕр çăмăл автомашина çĕмĕрнĕ. Унсăр пуçне, партизансем нимĕçсен 2 самолетне персе сиенленĕ тата противникăн чугунçул çинчи 4 эшелонне ÿпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕç салтакĕ Генрих Ройшель çумĕнче унăн арăмĕ Хемницран çырнă çырăва тупнă. Çав çырура çапла каланă: «Ку вăрçă тата мĕн вăхăта пырассине пĕлместĕп, анчах та халех ĕнтĕ урине аран-аран сĕтĕрсе пыракан çынсене кашни утăмрах куратăп. Пирĕн пĕлĕшсенчен нумайĕшне эсĕ халь ниепле те паллас çук. Анчах апла пулсан та каллех снабжени нормисене çĕнĕрен чакарасси çинчен калаçаççĕ. Мĕн пулĕши ун чухне пире?».

* * *

Норвеги патриочĕсем Норвеги çыраннĕнче нимĕç захватчикĕсем туса лартнă укрепленисене çĕмĕреççĕ. Гитлеровецсем 500 норвежеца Листер Фьор çывăхĕнчи аэродрома тума хăваласа пухнă. Хастарлă патриотсем ангарсене çунтарса янă, хурала вĕлерсе пĕтернĕ, унтан хĕçпăшалсем илнĕ те тусем хушшине кайнă.

* * *

Югославири партизансем нимĕçсемпе итальянец захватчикĕсене хирĕç паттăррăн çапăçаççĕ. Хăюллăн пыра-пыра тапăнса, патриотсем оккупантсене пĕтерсе пыраççĕ, вĕсенчен пăшалсемпе боеприпассем тыта-тыта илеççĕ. Б. хули çывăхĕнче партизансем, итальянецсен колонни çине пырса тапăнса, 32 салтакпа офицере пĕтерсе тăкнă. К. ялĕ патĕнче партизансене хирĕç çапăçнă чухне итальянецсен 160 салтакпа юфицер вилнĕ тата аманнă. 50 итальянеца партизансем тыткăна илнĕ. Противникран 12 пулемет, 2 миномет, 85 винтовка тата боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

«Бугурусланнефть» тресчĕн нефтепромысли, Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕскер, июль уйăхĕнче нефть кăлармалли кашни кунхи задание 119 процент тултарса пырать.

Лотерея билечĕсене илни—фронтпа тыла пулăшни

Лотерея билечĕсене вырнаçтарас ĕçе ăнăçлăн вĕçлер

Укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене июлĕн 29-мĕш тĕлне рабочисемпе служащисем хушшинче 2.683.000 тенкĕлĕх, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 10.328.000 тенкĕлĕх, пĕтĕмпе 13.011.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Лотерея билечĕсене вырнаçтарас ĕçре Куславкка, Сĕнтĕр, Чкаловски, Вăрмар, Комсомольски, Пăрачкав, Çĕрпÿ, Ишлей, Шăхасан районĕсем тата Шупашкар хули малта пыраççĕ. Йĕпреç, Вăрнар, Сĕнтĕрвăрри, Канаш, Шăмăршă районĕсем тата Улатăр хули лотерея билечĕсене сарас тĕлĕшпе малтанхи кунсенчи пекех çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Билетсене сарнă вăхăтрах вĕсен укçине пухас ĕç пырать. Республикăра пурĕ 8.297.000 тенкĕ укçа пухнă. Первомайски районри колхозниксемпе единоличниксем çыраннă суммăна пĕтĕмпех пухса панă. Çавăн пекех ку тĕлĕшпе Сĕнтĕр, Хĕрлĕ Чутай, Калинински, Шăхасан, Пăрачкав районĕсем те лайăх ĕçлеççĕ. Йĕпреç, Сĕнтĕрвăрри, Вăрнар, Элĕк, Советски, Тăвай тата Шăмăршă районĕсем юлса пыраççĕ.

Колхозниксен активлăхĕ

ШАХАСАН. (Телефонпа). Çĕнĕ лотерея билечĕсене илме «Хĕрлĕ Октябрь» колхоз членĕсем пурте çыраннчĕç. Колхозниксем нумайĕшĕ укçине çийĕнчех тÿлерĕç. 13 пин тенкĕлĕх çыранса, 9 пин тенкине çавăнтах пухрĕç. Иккĕмĕш лотерея билечĕсене илме М. Яковлев юлташ 150 тенкĕлĕх, С. Шерман юлташ 100 тенкĕлĕх çыраннчĕç.

Пурте çыраннчĕç

Шупашкарти табак фабрикинче иккĕмĕш лотерейăн билечĕсене çыранмасăр пĕр çын та юлман. Çыраннин сумми коллективăн уйăхри ĕçукçи фончĕн 14 проценчĕ чухлĕ шутланать. Чылайĕшĕсем лотерея укçине çийĕнчех хываççĕ. Бригадир Андреева, работницăсем Деменева, Овчинникова, Козина юлташсем уйăхри ĕçукçин 20—30 проценчĕ чухлĕ çыранса, укçине çийĕнчех тÿлесе татрĕç. Пурĕ 1.100 тенкĕ укçа пуханнă.

А. КАПРАЛОВА.
Парторганизаци секретарĕ.

* * *

Шупашкарти иккĕмĕш пожарнăй команда сотрудникĕсем лотерея билечĕсене хăйсен ĕçукçи фончĕн 30 проценчĕ чухлĕ çыраннчĕç. Таксин, Смирнов тата Живодеров боецсем уйăхра ĕçукçи 170-шер тенкĕ илеççĕ. Таксин юлташ 260 тенкĕлĕх, Смирновпа Живодеров юлташсем 200-шер тенкĕлĕх çыраннчĕç.

Пĕтĕм тырпула вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртмелле—çакăн пек тăван çĕршывăн, Сталин юлташăн приказĕ

Тырă вырма пысăк хаваслăхпа тытăнчĕç

КОМСОМОЛЬСКОЕ, июлĕн 28-мĕш. (Телефонпа). Паян районри «Янга Турмыш», «Красный воин», «1-ое августа» тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсем ыраш вырма тухрĕç. Ку колхозсем тырăсене суйласа илсе вăхăтра вырма тытăнчĕç. Районри ытти колхозсен уйхирĕнче те ыраш пулса çитсе пырать. Уйрăм участоксене суйласа вырма ыранах 15—20 колхоз тытăнмалла. Пысăк тухăçлă тырăсене вăхăтра вырса пухас ответлăха кашни колхозникпе колхозница тĕплĕн ăнланса илме тивĕçлĕ, уборкăна пысăк хăвăртлăхпа тата пахалăхпа туса ирттермелле.

Кăçал тырпулсем иртнĕ çулхинчен чылай тухăçлăрах пулни колхозниксен ĕçлес хастарлăхне çĕклет. «Янга Турмыш» колхоз членĕсем тырă вырма пысăк хавхаланупа тытăнчĕç. Тырă пулса çитнине тĕрĕслесе, вĕсем малтанхи кунах жнейкăсене те ĕçе кăларчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем тырăсене пĕр тăккаламасăр, чи кĕске срокра пухса кĕртессишĕн тăрăшаççĕ. Вĕсем уборкăна пур енĕпе те лайăх хатĕрленсе тухрĕç.

Июлĕн 31-мĕш тĕлне район ыраш вырма массăллăн тытăнмалла.

Б. МУСТАФИН.
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Ыраша суйласа вырма тухрăмăр

ЕЛЧĔК, июлĕн 28-мĕш. (Телефонпа). Чылай колхозсем уйрăм участоксене суйласа илсе ыраш вырма тытăнчĕç. «Октябрь», Сталин тата Дзержинский ячĕпе тăракан, «Ново-Чурино» колхозсем ĕнер ыраша вырăнĕн-вырăнĕн суйласа вырма тытăнчĕç. Хăшпĕр колхозсем тырă пулса çитсе пыракан участоксене машинăпа вырма хатĕрлеççĕ.

Ыраш районра пур çĕрте те пулса çитсе пырать. Ыран-паянах ăна пур колхозсен те вырма тытăнмалла. Кăçал пирĕн районри колхозсен уйхирĕсенче 280 жнейка, 8 косилка, 27 комбайн ĕçлемелле. Колхоз председателĕсен, трактористсемпе комбайнерсен уборкăра пур машинăсене те пĕр чарăнусăр ĕçлеттермелле, тырăсене кĕске срокра пухса кĕртме пĕтĕм вăйя кумалла.

В. МАРКОВ,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Тырпула пухса кĕме тытăнас умĕн

СĔНТĔРВĂРРИ, июлĕн 28-мĕш. (Телефонпа). Районри колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ —1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановлени тĕп вырăна хурса, тухăçлă тырпула пухса кĕртме тимлĕн хатĕрленчĕç. Уборка машинисене, транспорт инвентарĕсене, çавăн пекех çурласемпе кĕреплеллĕ çавасене те çителĕклĕ таранах юсанă тата çĕнĕрен тунă. 65 жнейка хатĕрленĕ, утă çулмалли 39 машинăна тырă вырмалла туса майлаштарнă. Молотилкăсене юсаса итемсем çине вырнаçтарса лартнă. Районĕпе кĕреплеллĕ çавасем 700 ытла хатĕрленĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем кăçал ялхуçалăх ĕçĕнче пысăк çĕкленÿпе ĕçлеççĕ. Вĕсем çум çумлас ĕçе тимлĕн туса пычĕç, 1.656 гектар çине лартнă çĕрулмие çум курăкĕсенчен тасатса купаласа хăварнă, ирхи çĕртме планне ирттерсе пурнăçланă.

Июлĕн 25-мĕш тĕлне район çаран утине тата клевера çулас ĕçе, пĕтĕмĕшпе илсен, вĕçлерĕ. Ку ĕçре 2—3 колхоз çеç каярах юлса пычĕç. Çак иртнĕ кунсенче колхозниксем утă çулас ĕçре уйрăмăнах пысăк хăвăртлăхпа ĕçлерĕç. Район июлĕн 20-мĕш тĕлне утă çулас плана 35 процент тултарнă пулсан, июлĕн 25-мĕш тĕлне утă çулса пухас ĕç вĕçленсе пынă.

Уборкăна массăллăн тухас умĕн районри колхозсен утă çулса пухас, государствăна утă парас тата çулса пухнă утта пĕтĕмĕшпех лапана хывса хăварас ĕçсене вĕçлемелле. Тырăсене вырма тĕплĕн хатĕрленсе çитнине татах тепĕр хут тĕрĕслемелле. Уйрăм участоксенче пулса çитнĕ тырăсене суйласа илсе вырма тытăнмалла.

Тырпула пухса кĕртме нумай колхозсем тĕплĕн хатĕрленчĕç. Ку, вăл колхозсем кăçал пысăк тухăçлă тырпула вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртессине палăртать. Анчах та уборкăна пĕр чăрмавсăр туса ирттерес пулсан, колхозсенче ĕç дисциплинине çирĕп пулмалла, кашни колхозникпе колхозница уборкăра вăйне шеллемесĕр, кунĕн-çĕрĕн ĕçлемелле. Çакна малта пыракан колхозсем тĕплĕн шута илнĕ. «Хĕрлĕ Çар» колхоз, тĕслĕхрен, кăçалхи тырăсене 20 ĕç кунĕ хушшинче, ыраш, кĕрхи тулă тата тырса-ясмăка 9 кун хушшинче пĕтĕмĕшпех вырса кĕртме палăртать. Колхоз утă çулса пухнă, государство умĕнчи обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçланă. Колхозра ачасен яслийĕ июлĕн 1-мĕшĕнче ĕçлеме тытăннă.

Н. БОРЗОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Мамăш ялсоветĕнчи колхозсем уборкăна тухма хатĕр

ИШЛЕЙ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ кăçалхи тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен йышăннă постановлени Мамăш ялсоветне кĕрекен «Коммунист», «17-й партсъезд», Буденный тата Каманин ячĕсемпе хисепленсе тăракан колхозсем пысăк активлăхпа сÿтсе-яврĕç. «Коммунист» колхоз членĕсем постановлени çине ответлесе кăçалхи тырăсене хăвăрт та пĕр тăкаксăр пухса кĕртме, кашни колхозникпе колхозница хăйсен кулленхи ĕç нормине 200-шер процентран кая мар тултарса ĕçлеме пулчĕç. Колхозра тырă вырнă вăхăтра ачасен яслийĕ тата пĕрлешÿллĕ столовăй пулать.

Буденный ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсемпе колхозницисем куллен тимлĕн ĕçлеççĕ. Кĕрхи тырăсене 5 кун хушшинче, çурхи тырăсене 6 кун хушшинче пĕтĕмĕшпех вырса пухма пулаççĕ. Уборка вăхăтĕнче колхозăн уйхирĕнче 2 жнейка, кашни бригадăра 9-шар кĕреплеллĕ çавасем ĕçлемелле.

«Коммунист» колхоз та жнейкăсене юсаса лартнă, вĕсемпе ĕçлеме уйăрнă лашасене вăйлă апат çине тăратнă тата кĕреплеллĕ çавасем 29 туса хунă.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннă колхозсем кăçалхи тырпулсене организованно пухса кĕртес ĕçе тухма тимлĕн хатĕрленчĕç. Ялсоветĕнчи колхозсем ирхи çĕртме сухине июлĕн 1-мĕш тĕлне пĕтĕмĕшпех тата пысăк пахалăхпа туса хăварчĕç. Буденный ячĕпе тăракан колхоз государствăна тырă памалли обязательствăна 75 процент тултарчĕ, «17-й партсъезд» колхоз аш-какай тата çăмарта обязательствисене пĕтĕмĕшпех парса татнă.

Кăçалхи вăйлă тырпула колхозниксемпе колхозницăсем пысăк пахалăхпа пухса кĕме хатĕр тăраççĕ.

П. РЫКОВ.
Мамăш ялсовет исполкомĕн председателĕ.

Профсоюзсемпе комсомолăн çуллахи кросĕн итогĕсем

Комсомолăн Чăваш организацине ВЛКСМ Центральный Комитечĕн грамотине панă

ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕн профсоюзсемпе комсомолăн çуллахи кросне ирттерекен организациллĕ комитечĕ ăмăртăвăн итогĕсене тунă.

Организациллĕ комитет çакна палăртнă: Мускав, Новосибирск, Горький, Омск, Ростов, Челябинск, Свердловск облаçĕсенчи, Казах, Чăваш, Башкир, Армян, Коми республикисенчи организацисем кроса хатĕрленессине тата ăна ирттерессине лайăх пурнăçа кĕртнĕ, профсоюзсемпе комсомолăн çуллахи кросне халăхăн анлă массисене хутшăнтарнă.

Кросра лайăх результатсем кăтартнăшăн ВЛКСМ Центральный Комитечĕ хăйĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Мускав организацине памалла тунă. Новосибирск облаçĕнчи, Казах тата Чăваш республикисенчи организацисене ВЛКСМ Центральный Комитечĕн грамотине парса наградăланă.

Физкультурăпа спорт ĕçĕсен Пĕтĕм Союзри комитечĕ хăйĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Новосибирск облаçне пама йышăннă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Ĕçре малта пыраканесем парти ретне кĕреççĕ

Пирĕн чылай пуçламĕш парторганизацисем отечественнăй вăрçă [illegible]

[illegible]

ВКП(б) ретне ĕçре малта пыракансем, Ленин — Сталин партине [illegible]

[illegible]

«Труженик» заводра та [illegible]

[illegible]

Пирĕн парти ретне илес ĕç [illegible]

Г. СОТНИКОВ.

ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн оргинструкторски отделĕн заведующийĕ.

Всевобуч пунктĕнче

Всевобучăн Энтриялĕнчи пунктĕнче çар ĕçне вĕренесси пысăк пахалăхпа, çирĕп дисциплинăпа пулса пырать. Боецсем нумайĕшĕ «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕренеççĕ. Г. Иванов юлташ командир пулса тăракан ротăри боецсем пурте тенĕ пекех вĕренÿре «отлично» тата «хорошо» паллăсем илеççĕ. Çак рота подразделенисем малти вырăнта тăрать. Боецсем А. Орлов, Е. Иванов, Г. Калинин «отлично» вĕренсе пыраççĕ.

Вĕренÿ пунктĕнче вунă хутчен тактикăллă тата 9 хутчен строевой занятисем пулнă. Июлĕн 16-мĕшĕнчи тактикăллă заняти аван иртрĕ. Çак занятинче Иванов роти мала тухрĕ. Унăн боецĕсем çирĕп дисциплинăллă пулни, çар ĕçне лайăх пĕлни, пластунла шума лайăх вĕренни палăрчĕ.

Райвоенком И. Тямушкин, всевобуч инструкторĕ Городецкий юлташсем тактикăллă заняти пысăк пахалăхпа иртнине палăртрĕç. Çак кун çар ĕçне лайăх вĕренсе пыракан 13 боец комсомол ретне кĕме, политрук В. Иванова штаб начальникĕ Порфирьев юлташсем ВКП(б) членĕн кандидатне кĕме ыйтса заявленисем пачĕç. Паянхи кун тĕлне всевобучăн вĕренÿ пунктĕнче 32 çамрăка ВЛКСМ членне илнĕ.

Боецсен политикăллă пĕлÿлĕхне ÿстерес тĕлĕшпе вĕренÿ пункчĕн комиссарĕ В. Нимаков юлташ, политруксем В. Иванов, П. Александров, М. Мефодьев юлташсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕренÿ пункчĕ 27 экземпляр хаçат-журнал илсе тăрать тата библиотекăра çĕнĕ кĕнекесем чылай.

Нумаях пулмасть ВКП(б) райком секретарĕ Н. Матвеев юлташ боецсем валли «Хĕрлĕ Çар вăй-хăвачĕн çăлкуçĕ» темăпа лекци вуласа пачĕ. Боецсемпе командирсем çак лекцие тимлĕн итлерĕç.

Вĕренÿ пуçланнăранпа подразделенире 2 номер, ротăсенче 9 номер стена хаçачĕ тата боевой листоксем 11 номер кăларнă, хутла сахал пĕлекен 39 боеца хут вĕрентнĕ.

Боецсем çар ĕçне тăрăшса вĕреннипе пĕрлех, красноармеец-фронтовиксен çемьисене те 27 хуçалăха картасем, вутă хумалли сарайсем, лупас айĕсем юсаса парса пулăшнă, Высоковка колхозне 11 гектар, Энтриялĕнчи колхоза 5 гектар утă çулса пуçтарса панă.

С. ШАДИН.

ШĂХАСАН. (**Хамăр корр**).

ХĔРАРĂМСЕМ ÇАР ĔÇНЕ ВĔРЕНЧĔÇ

ЕТĔРНЕ. Осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕсем халăха ПВХО ĕçне вĕрентессине малалла туса пыраççĕ. Чурпай ялсоветĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозра учительница М. Шумилова юлташ 312 çынна ПВХО правилисене вĕрентрĕ, вĕсем пурте зачетсем пачĕç. «Правда» колхозра общественнăй инструкторсем А. Мурзинăпа П. Цветкова юлташсем 178 çынна ПВХО ĕçне вĕрентрĕç.

Осоавиахимăн Чурпай ялсоветĕнчи пуçламĕш организацийĕ ПВХО ĕçне вĕрентессине лайăх туса пынипе пĕрлех осоавиахим ретне çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе те лайăх ĕçлерĕ. Çак организацире 142 çын тăрать. Унти çамрăк хĕрарăмсем 80 сехетлĕ программа тăрăх çар ĕçне вĕренсе тухрĕç. Вĕсем винтовкăран пеме, граната ывăтма, химиллĕ тапăнуран сыхланма вĕренчĕç.

И. ТИМОНИН.

Физкультура ĕçне çÿллĕ пусăма!

Пирĕн Чăваш республикинчи çĕршер физкультурниксем совет çĕршывĕн чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхне хÿтĕлеме Хĕрлĕ Çар ретне тăчĕç.

Вăрçăччен «Спартак» спорт обществинче инструктор пулса ĕçленĕ Николай Солдатченко юлташ «За отвагу» медаль илнĕ. Чăвашсен педагогика институчĕн студенчĕ пулнă физкультурник Григорьев юлташа чăçăн командованийĕ правительство наградине пама тăратнă. Вăрçăра тăшмана хирĕç çакăн пек хастарлăн çапăçакан физкультурниксем сахал мар.

Физкультура ĕçĕнчен фронта кайнă работниксен вырăнне хĕрарăмсем тăчĕç. Физкультурăн Шупашкар хула комитечĕн председателĕ пулса йĕлтĕрçĕ тата çăмăл атлет Филичкина юлташ ĕçлет. «Буревестник» обществин физкультурникĕсене спорт мастерĕ М. Гущина, «Медик» обществине—Симонова юлташсем ертсе пыраççĕ. Республикăн 16 районĕнче физкультура инструкторĕсем пулса хĕрарăмсем ĕçлеççĕ.

Физкультура организацийĕсем Хĕрлĕ Çар валли резервсем хатĕрлеме пулăшаççĕ. Профсоюзсемпе комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросне республикăра 109.218 çын хутшăннă, 97 пин çын ытла ГТО тата БГТО нормисене панă.

Граната ывăтассипе апрель уйăхĕнче ирттернĕ ăмăртăва 50 пин çын ытла хутшăннă, вĕсенчен 43 пин çын ГТО нормисене панă.

Профсоюзсемпе комсомолăн çуллахи кросне 96.955 çын хутшăннă, вĕсенчен 87 пин çын ГТО нормисене панă.

Физкультура енĕпе çакнашкал массăллă ĕçсем туса иртернипе пĕрлех, спортсменсен кăтартуллă ăмăртăвĕсене те организациленĕ. Футболла вылякансен «Чăваш АССР кубокне» илессишĕн ăмăрту пырать. Шупашкар хулинче футбол вăййипе ăмăртура «Спартак» обществи малти вырăнта тăрать.

Анчах физкультура ĕçĕнче çитменлĕхсем те сахал мар. ГТО нормине парас тата физкультурăн общественнăллă кадрĕсене хатĕрлес ĕçсем начар тăраççĕ. Красноармейски районра ГТО значкисчĕсем хатĕрлес плана июлĕн 1-мĕш тĕлне 81 процент, Советски районра—50 процент, «Динамо» обществинче 50 процент ытларах кăна пурнăçа кĕртнĕ. Значкистсем хатĕрлесси спорт обществисен енĕпе Улатăр, Куславкка, Пăрачкав, Етĕрне тата Вăрмар районĕсенче çителĕксĕр пулса пырать.

Чăваш республикинчи физкультура организацийĕсен государство заданийĕсене пурнăçа кĕртме çуллахи вăхăтпа туллин усă курас пулать, физкультура ĕçне общественнăллă актива анлăрах хутшăнтармалла. Физкультура организацийĕсем Хĕрлĕ Çар валли резервсем хатĕрлес ĕçре пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Хĕрлĕ Çар валли вăйхал тĕлĕшĕнчен тĕреклĕ, сирĕп боецсем хатĕрлесси—физкультура организацийĕсен хисеплĕ те пархатарлă ĕçĕ. Çак ĕçе çине тăрса туса пырас пулать.

Совет физкультурникĕсен хăйсен мĕнпур ĕçне вăрçăра çĕнтерÿ тăвас задачăна пăхăнтармалла.

В. НИКИШОВА.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕн председателĕ.

Виççĕмĕш кварталти финанс планне срокчен тултарассишĕн

1942 çулăн малтанхи çурçулĕ государство обязательствисене пурнăçлас ĕçре пирĕн халăхăн активлăхĕ ÿснине кăтартрĕ. Укçа-тенкĕ пухас плана пĕрремĕш кварталта 23 район, иккĕмĕшĕнче 24 район срокчен тата ытлашшипех тултарчĕç. Çавна май республика халăх средствисене мобилизацилемелли плана пĕррремĕш кварталта 103 процент, иккĕмĕш кварталта 106 процент тултарчĕ.

Республикăра уйрăмах государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне вырнаçтарас ĕç ăнăçлăн иртрĕ. Вунă кун хушшинче ăна 64 миллион тенкĕлĕх, иртнĕ çулхи заемран 39 миллион тенкĕ ытларах, вырнаçтарнă. Колхозниксем заем укçине, ытти çулхисемпе танлаштарсан, чылай хăвăрт срокра тÿлесе татрĕç.

Пĕтĕм Союзри ăмăртăва пуринчен малтан Шăхасан районĕнчи финанс работникĕсем (райфо заведующийĕ Волков юлташ) хутшăнчĕç, хăйсем çине тăтăклă обязательствăсем илчĕç. Халăх средствисене мобилизацилемелли плана район 1942 çулти малтанхи икĕ кварталта срокчен тата иртерсе тултарчĕ. Укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене кунта малтанхи кунах 446.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă, 400.000 тенкĕ укçа пухнă. Тÿлев извещенийĕсене алла парриччен, районра ялхуçалăх налогне 110.000 тенкĕ пухма ĕлкĕрнĕ.

Халăх средствисене мобилизацилес тĕлĕшпе Хĕрлĕ Чутай районĕнчи финанс работникĕсем (райфо заведующийĕ Андреев юлташ) лайăх ĕçлеççĕ. Пĕррремĕш квартал планне срокченех тата ытлашшипех тултарнăшăн вĕсем Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕн тата финанспа банк работникĕсен профессиллĕ Союзĕн облаçри комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕç. Иккĕмĕш кварталта халăх средствисене мобилизацилемелли плана 115 процент, государство тупăшĕсене пухмалли плана 175 процент тултарса, çак ялава вĕсем хăйсен аллинчех хăварчĕç.

Элĕк районĕнчи финанс работникĕсем те (райфо заведующийĕ Семенов юлташ) юлашки уйăхсенче хăйсен ĕçне палăрмаллах вăйлатрĕç. Район иккĕмĕш кварталта халăх средствисене мобилизацилемелли плана 143 процент, государство тупăшĕсене пухас плана 246 процент тултарчĕ. Çавăн пекех Ишлей, Советски, Вăрмар тата Сĕнтĕр районĕсенче те укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе чылай ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Çав вăхăтрах укçа-тенкĕ пухас ĕç Канаш, Йĕпреç, Первомайски тата Пăрачкав районĕсенче çителĕксĕр пырать. Вăл районсенче укçа-тенкĕ пухмалли плана çак çулăн малтанхи икĕ кварталĕнче те тултарайман. Çакă вăл, тĕпрен илсен, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне çителĕксĕр туса пынинчен килет. Ялсоветĕсемпе колхоз председателĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕçе ытти ĕçсем хушшинче манса хăвараççĕ. Финанс оргăнĕсен руководителĕсем социализмлă ăмăртăва тивĕçлипе сарса яман, налог агенчĕсене, уйрăмах çамрăксене, ĕçре пулăшу парса тăмаççĕ, ялти активпа ĕçлессине хакламаççĕ.

Асăннă районсенчи ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсемпе райсовет исполкомĕсен председателĕсен финанс оргăнĕсен ĕçĕсене тĕтĕшах тĕрĕслесе тăрас пулать, ку таранччен пулнă çитменлĕхсене пĕтерме пулăшас пулать.

Виççĕмĕш кварталта республикăри финанс работникĕсем умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Бюджета кашни статья тăрăх уйрăмăн тултармалла, ку таранччен тулемесĕр юлнă укçасене, уйрăмах вăрçă вăхăтĕнчи налога пухса çитермелле. Кусемсĕр пуçне ялхуçалăх налогĕн тата пурлăхсемпе выльăх-чĕрлĕхсене обязательнăй йĕркепе страхлассин кампанине тĕрĕс те ăнăçлă иртерме кирлĕ. Çавна май колхозниксем хушшинче налог тата страховка укçисене срокченех тÿлемелле тăвас тĕлĕшпе ĕçлес пулать. Укçа-тенкĕ пухас плана срокченех тултарни вăл — фронта çĕнĕ самолетсем, танксем, тупăсем, пулеметсем т. ыт. хĕçпăшалсем пани пулать.

Республикăра укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене вырнаçтарас ĕç ăнăçлăн пырать. Рабочисемпе служащисем, колхозниксемпе единоличниксем лотерея билечĕсене пысăк çĕкленÿпе сыранса, хăйсен укçисен пĕр пайне фронта пулăшнă çĕре параççĕ. Июлĕн 28-мĕш тĕлне республикăра лотерея билечĕсене 12.993.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă, укçине 8.297.000 тенкĕ пухнă.

Финанс оргăнĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕнче çĕнтерекенсем валли Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ хăйĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне турĕ тата 3-мĕшпе 4-мĕш кварталсенче мала тухнă финанс работникĕсене премилеме виçĕ премиç (12 пин, 8 пин тата 5 пин тенкĕ) уйăрчĕ.

Финанс органĕсен задачи — Чăваш АССР правительствин куçса çÿрекен ялавĕпе премисене илме тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешесси.

В. ТАВРИН,

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн заместителĕ.

КУРСРАН ВĔРЕНСЕ ТУХРĔÇ

ÇĔМĔРЛЕ. («**Чăваш Коммуни» корр**.). Çак кунсенче медицина сестрисем хатĕрлекен курс хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ. Курсран 22 çын вĕренсе тухрĕ. Вĕсен хушшинче древкомбинатри стахановка-двухсотница Андреева, Макарович, Афанасьева, Омельченко тата ытти те.

Занятисем 5 уйăх хушши пычĕç. Курсра уйрăмăнах М. Капул, М. Бромберг, А. Григорьев врачсем тăрăшса вĕрентрĕç.

Комсомолецсем ялхуçалăх машинисен пайĕсене пухаççĕ

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем Канаш районĕнчи колхозсемпе МТС валли ялхуçалăх машинисен пайĕсемпе инструментсем пухаççĕ. ВЛКСМ заводри комитечĕ кашни цехрах машина пайĕсемпе инструментсем пухас ĕçе туса пыма уйрăм бригадăсем организациленĕ. Вĕсенчен тимĕрçĕ цехĕнчи (комсорг Наливайко юлташ) бригада уйрăмăнах лайăх ĕçлет. Унти комсомолецсем ĕçсем хыççăн юлса 10 зубило, 5 мăлатук хатĕрлерĕç. Июлĕн 20-мĕш тĕлне заводри çамрăксем МТС валли 15 лист тимĕр, 50 штука ытла тĕрлĕ инструментсем т. ыт. те пухса пачĕç.

Г. ПАВЛОВСКИЙ,

ВЛКСМ заводри комитечĕн секретарĕ.

ШКУЛ АЧИСЕМ ПРОИЗВОДСТВĂРА

ЙĔПРЕÇ. Буинскри вăтам шкулта вĕренекенсем çуллахи каникул вăхăтне фронта усăллă иртерме шутларĕç. Буинскри вăрман заводне 24 ача, сланец рудникне 35 ача тата 45 ача колхоза ĕçлеме кайрĕç. Халĕ вĕсем асăннă производствăсенче хастарлăн ĕçлеççĕ.

И. РУБЦОВ.

Ютçĕршывсенче

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçă

ЛОНДОН, июлĕн 27-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: июлĕн 26-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен Англин истребителĕсем Францин Гравелинпа Абвиль хушшинче выртакан çыранĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă, истребительсем шалалла вĕçсе кĕрсе Сент-Омер тĕлнех çитнĕ. Сывлăшра противникăн истребителĕсемпе темиçе хутчен çапăçса илнĕ. Çав çапăçусенче противникăн 9 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Июлĕн 26-мĕшĕнче кăнтăрла Англин çыранри аэродромĕсем тĕлĕнче противник самолечĕсен пĕр пĕчĕк группи вĕçнине палăртнă. Англин кăнтăр-хĕвеланăç çыранĕнчи пункчĕсенчен пĕринче çав самолетсем бомбăсем пăрахнă. Вĕсем кÿнĕ сиен пысăках мар, вилнисемпе аманнисем нумай мар.

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСМ ГАМБУРГ ÇИНЕ ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июлĕн 27-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: июлĕн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Гамбург çине вĕçсе пырса хаяррăн тапăннă. Малтанлăха пĕлнĕ тăрăх, çав тапăну питĕ ăнăçлă пулнă. 29 бомбардировщик хăйсен базине таврăнман.

АВСТРИРЕ 17.000 ÇЫННА АСАПЛАНТАРСА ВĔЛЕРНĔ

ВАШИНГТОН, июлĕн 25-мĕш. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, Австрие оккупациленĕрене нимĕçсем 17.000 çынна ытла асаплантарса вĕлернĕ, 97.000 çынна тĕрмене хупнă. Австрин 120.000 гражданне ирĕксĕрлесе Польшăна янă, унта вăсăпа тата асаплантарнипе 53.000 çын вилнĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ БОЛГАРИ ХРЕСЧЕНĔСЕНЕ ÇАРАТАÇÇĔ

ЖЕНЕВА, июлĕн 25-мĕш. (ТАСС). Софире министрсен Совечĕн распоряженине пичетлесе кăларнă, унта Болгари хресченĕсенчен ялхуçалăх продукчĕсене туртса илмелли çинчен каланă. Çав распоряжени тăрăх, кашни хресченĕн кăлартса панă тухăçĕн пĕтĕмпех тырĕ памалла, ăна «продэкспорт» амбарне леçсе памалла («продэкспорт» — продовольствие Германие илсе кайс ĕçе пăхса тăракан организаци). Хресчен хуçалăхĕнче ĕçлекен кашни çын валли, çитес çул çĕнĕ тыра вырса иличчен пурăнма, кунне 400 грамм тĕпĕ тырĕ хăвараççĕ. Кашни хресчен мĕн чухлĕ выльăх апачĕпе усă курма пултарнине те кăтартса панă. «Ытлашши» выльăх апатне çав организацие памалла.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ФРАНЦИ ХАЛĂХНЕ ÇĔНĔ АСАПСЕМПЕ ХĂРАТАÇÇĔ

Лавалĕн Франци рабочийĕсене Германие пуçтарса ярас тĕлĕшпе пуçласа янă кампанийĕ нимĕнсĕрех пĕтсе ларнă. Халĕ гитлеровецсем тарăхнипе Францин оккупациленĕ зонăри пĕтĕм предприятисене хупса лартатпăр тесе хăратаççĕ. Хуптарас темесен, Германие халех рабочисем пуçтарса ярăр, теççĕ.

Нимĕçсем тыткăна лекнĕ салтаксене, пуринчен ытла сывмар пулнисене, халиччен Франције пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн ярса тăнă. Халĕ вĕсем тыткăнран пĕр француза та ямаççĕ. (ТАСС).

ИСПАНИ РЕСПУБЛИКАНЕЦĔСЕН КУНÇУЛĔ

ЛОНДОН, июлĕн 24-мĕш. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лаваль Францире пурăнакан Испани республиканецĕсене, Испанирен тарнăскерсене, 100.000 çынна Германие яма шухăшлать. Çав республиканецсене е фашистла Испание таврăнма, е Германие кайма хушма шутлаççĕ. Испание таврăнни вĕсене вĕлерессине е тĕрмене хупассине пĕлтерет, Германие кайни — чуралăха кĕрсе ÿкессине пĕлтерет.

Ялти пуçламĕш парторганизацисене вăйлатмалла

Отечественнăй вăрçă условийĕсенче пуçламĕш парторганизацисен, кандидатсен групписен, партипе комсомол группиcен ролĕ тата пĕлтерĕшĕ нумай ÿсрĕ.

Совет Союзĕнчи миллионшар ĕççынисем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç, тăшмана çĕнтерес вăхăта çывхартас тĕлĕшпе хăйсен пурнăçĕсене шеллемесĕр тăрăшса ĕçлеççĕ. Социализмлă ăмăртура çĕнтерÿ тумалли условисенчен пĕри — пуçламĕш парторганизацисем партин организациллĕ ĕçне лайăх йĕркелени пулса тăрать.

Кашни коммунист социализмлă ăмăртура ертсе пыраканĕ пултăр тесен, коммунист мĕн ĕçлеме пултарнине лайăх пĕлни кирлĕ, кашни коммуниста уйрăммăн ĕçлеме вĕрентсе пымалла. Çакăн пек ĕçлесси çине уйрăмах ялти пуçламĕш парторганизацисенче хытăрах çавăрăнса пăхмалла.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсем ялти коммунистсем умне çĕнĕ требованисем кăларса тăратрĕç. Колхозниксем нумайĕшĕ Хĕрлĕ Çар ретне кайрĕç. Колхозсене, бригадăсене, фермăсене ертсе пырас ĕçсене нумай çĕрте çĕнĕ çынсем туса пыраççĕ. Колхоз ĕçне хĕрарăмсемпе çамрăксем йышлăн хутшăнчĕç, вĕсем колхозсенче активлăн ĕçлеме тытăнчĕç, колхозсенче ĕç дисциплинине пирки ыйту çĕнĕрле тăрать. Çаксене пурне те ялта партиллĕ-политикăллă ĕçе туса пынă чухне шута илес пулать.

Анчах партин хăшпĕр райкомĕсемпе МТС-сен политотделĕсем ялта çавăн пек улшăнусем пулнине шута илмен, парти ĕçне ялта ĕлĕкхи пекех туса пыма пăхнă. Ялти хăшпĕр парторганизацисенче коммунистсен йышĕ сахалланчĕ. Çавăн пек пулса пынине пĕлсе тăнă çĕртех, ВКП(б) райкомĕсем партин ялти вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухма, пуçламĕш парторганизацисене ялти массăллă-политикăллă ĕçĕн тĕп пункчĕсем туса хума кирлĕ ĕçсене туса иртермен. Çавăн пирки ĕнтĕ Элĕк, Куславкка, Первомайски, Октябрьски тата Шăхасан районĕсенче колхозри пуçламĕш парторганизаци пĕртте çук. Пуçламĕш парторганизацин йышĕ сахаллансан, унта ВКП(б) уставĕнче кăтартнă чухлĕ йыш юлмасан, хăшпĕр райкомсем шухăшласа тăмасăрах çав организацие пĕтерсе лартасси çинчен решени йышăнаççĕ. Çак райкомсем вара партие çĕнĕ членсем илнипе, ытти парторганизацисенчи коммунистсене куçарнипе кун пек парторганизацисене хăварма тăрăшмаççĕ.

Ишлей районĕнчи ялсенчи пуçламĕш парторганизацисен ĕçне тĕрĕслениничен мĕн курăнĕ-ха? ВКП(б) райкомĕ пуçламĕш парторганизацисен ĕçне лайăхлатасси çине ытла та сахал çавăрăнса пăхать. Ялти парторганизацисенче чылайĕшĕнче партин политикăллă ĕçне япăхлантарса янă. Колхозсенчи парторганизацисем хуçалăхри ĕçсене тĕплĕн пĕлни çук, хуçалăхлă ĕçсене лайăхлатассинче кирлĕ пулăшăва параймаççĕ, колхозниксем хушшинче çителĕклĕ ĕçлесе пымаççĕ. Пуçламĕш парторганизацийĕсен нумайĕшĕн ĕç планĕ çук, парти пухăвĕсем сайра хутра кăна пулаççĕ, партин учет ĕçне япăх туса пыраççĕ, партие çĕнĕ членсем илес ĕç начар тăрать, кандидатсем хушшинче ĕçлессине çителĕксĕр организациленĕ.

Сăмахран, «Клевер» колхозри парторганизацире кăçал ултă уйăх хушшинче те пĕр пуху та иртермен. Çав колхозра стахановецсем, малта пыракан бригадирсем, колхозницăсем, комсомолецсем — партире тăма тивĕçлĕ çынсем пур. Çапах та парторганизаци 1941 çулти июль уйăхĕнчен вара парти ретне пĕр çын та илмен. Массăсем хушшинче агитациллĕ ĕçе япăх организациленĕ. Колхозри комсомол организацийĕ те çителĕксĕр ĕçлет. Комсомолецсем колхозра лайăх ĕçсене пуçарса пыни çук, союзра тăман çамрăксене политикăллă воспитани парас ĕçе туса пымаççĕ.

Ялти пуçламĕш парторганизацисен ĕçĕнче çитменлĕхсем нумай пулсан та, ВКП(б) Ишлей райкомĕн бюровĕ 1942 çулта ялти пĕр парторганизацин отчетне те итлемен, партин шалти ĕçĕсем çинчен сахал сÿтсе-явнă.

Çак райкомăн оргинструкторски отделĕ пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсене практикăллă пулăшу парас тĕлĕшпе начар ĕçлет, парти ĕçне туса пыма, вăл е тепĕр ыйтăва татса пама вĕрентмест. Çавăн пекех МТС политотделĕ те колхозсенчи организацисене, кандидатсен группиcене сахал пулăшать.

Ялти пуçламĕш парторганизацисене вăйлатас, вĕсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе ВКП(б) Шăмăршă тата Октябрьски райкомĕсем те çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Партин Октябрьски райкомĕн оргинструкторски отделĕнче пуçламĕш парторганизацисене пулăшса, вĕсен секретарĕсене ĕçлеме вĕрентсе пыракан çук. Ку отделăн пĕртен пĕр инструкторĕ çулйĕр çинче ĕçлет. Шăмăршă районĕнчи «Сталь» колхозри парторганизацире 1942 çулти январьтен пуçласа июлĕн 1-мĕшчен райком инструкторĕ пулман, райкомăн ытти работникĕсем колхоза пырса çÿренĕ, анчах вĕсем парторганизаци ĕçĕпе интересленмен.

Часах акă колхозсемпе совхозсем тырпулсене пухса кĕртме тата ялхуçалăх продукчĕсене государствăна пама тытăнĕç. Çакăнтан ĕнтĕ ВКП(б) райкомĕсемпе МТС политотделĕсен ялти пуçламĕш парторганизацисен ĕçĕсем çине ытларах çавăрăнса пăхма кирли курăнать. Ялти пуçламĕш организацие кашниех колхозниксем хушшинче парти влиянине саракан тĕп пункт тăвас пулать. Вăл парти райкомĕпе политотдела колхозниксен массисемпе тачă çыхăнтарса тăтăр.

Колхозниксем тата совхозсемпе МТС-сенчи рабочисем чăннипех те социализмла ăмăртса ĕçлессине йĕркелесе ярасси — ялти парторганизацисен задачи пулса тăрать. Çак задачăна пурнăçа кĕртсе пыма массăсем хушшинче партин политикăллă ĕçне лайăх организацилемелле, колхозниксен политикăллă ăнланулăхне ÿстерме тăрăшмалла. Çакна тусан парторганизацисем ялхуçалăхĕнчи ĕçсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме, ялхуçалăх продукчĕсене государствăна срокченех парса татмашкăн колхозниксене тата ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсене пурне те мобилизацилеме пултарĕç.

Д. ТАЛДЫКИН.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн оргинструкторски отделĕн заведующийĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

При Чувашском сельскохозяйственном институте с 1-го августа 1942 года

ОТКРЫВАЮТСЯ КУРСЫ

по подготовке к экзаменам лиц, окончивших средние школы до 1941 года, а также по подготовке лиц, не имеющих законченного среднего образования, к сдаче ими в 1942 году экстерном экзаменов за курс средней школы с целью приема их после этого в ВУЗ без экзаменов.

Обучение на курсах бесплатное. Курсанты обеспечиваются общежитием и столовой.

ДИРЕКЦИЯ ИНСТИТУТА.

Мариинско-Посадский Лесотехникум и Древтехникум, в дополнение к опубликованным ранее об'явлениям, сообщают, что прием в вышеуказанные техникумы продлен до 1 сентября 1942 года.

Лица, окончившие семилетку в 1941—42 году, принимаются в техникум без испытаний.

Дирекция.

АРТЕЛИ «КООПЕРАТОР»

требуется главный бухгалтер. Зарплата по госнормированию, обеспечивается квартирой. Справляться по адресу: гор. Чебоксары, улица Ленина, 6.

В ЧЕБОКСАРСКОМ КИНОТЕАТРЕ

С 29 июля и ежедневно демонстрируется новый звуковой художественный фильм

«МАСКАРАД»

Начало сеансов в 10, 12, 14, 16, 18, 20 и 22 часа.

Открыта предварительная продажа билетов.

Госсанинспекция города Чебоксар доводит до сведения всех граждан, что в городе Чебоксарах имеют место отдельные случаи заболевания коров ящуром.

Молоко следует употреблять только в кипяченом виде.

Госсанинспекция города.

ПРОПАЛА кобыла буланой масти. Знающих о ее местонахождении просим сообщить по адресу: Кугеси, Чебоксарского района Чувашской АССР, Чебоксарской заготконторе Райпотребсоюза.

ХЛЕБОКОМБИНАТУ срочно требуется ГЛАВНЫЙ БУХГАЛТЕР.

Оплата по соглашению. Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, улица Чернышевского, 6.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 897 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 5. 52 84 п. д.